# Пĕр тĕллевпе, тачă çыхăнса



***Право йĕркине уяманнипе хирĕç кĕрешесси, киревсĕр ĕçсен çулне пӳлесси, преступленисене уçса парасси республикăра мĕнле пурнăçланса пырать? ЧР Шалти ĕçсен министерствин тата шалти ĕçсен органĕсен умĕнчи малашнехи ĕç тĕллевĕсем еплерех? Çак тата ытти çивĕч ыйтусене ЧР шалти ĕçсен министрĕ В. АНТОНОВ хуравлать.***

**– Вадим Валентинович, республикăри право йĕркине мĕнле хаклатăр?**

– Чăваш Енри шалти ĕçсен органĕсем паян административлă çĕнйĕркелӳсен процесне активлă хутшăнаççĕ, профилактика ĕçĕн нумай майлă тытăмĕнче тĕп пай шутланаççĕ. Чăваш Ен Президенчĕ Николай Васильевич Федоров республикăн Шалти ĕçсен министерствин ку сферăри ĕç-хĕлне лайăх хак пачĕ. Профилактика – министерство ĕçĕнчи тĕп çул-йĕрсенчен пĕри. Преступность шайĕ ӳсессине чарма май килчĕ, республикăра террорла актсене пулса иртме паман. Обществăлла политика лару-тăрăвĕ те, нацисем хушшинчи хутшăнусем те лăпкă. 2006 çулта акă, уйрăмах йывăр тата йывăр преступленисем самаях чакрĕç, киревсĕр ĕçсене уçса параслăх шайĕ те таврара чи лайăххисенчен пĕри. Хĕç-пăшалпа усă курса тунă преступленисен шучĕ те сахалланчĕ.

**– Тĕрлĕ ыйтăмсем кăтартнă тăрăх, милици ĕçне хăть мĕнле хакласан та, мĕн те пулин сиксе тухас-тăк çынсем “02” номерпе шăнкăравлаççĕ. Шанăça тӳрре кăларас тесе Чăваш енре мĕнле ĕçсем пурнăçлаççĕ?**

– Милици сотрудникĕсене паян çăмăл килмест. 2006 çулта, сăмахран, ЧР Шалти ĕçсен министерствин дежурнăй чаçне “02” телефонпа граждансенчен 800 пин ытла пĕлтерӳсемпе заявленисем килнĕ. Ку хисепе уйăхсем, кунсем тата сехетсем çине пайласан, кашни минутрах кам та пулин милицие шăнкăравласа пулăшу ыйтни курăнать. Йĕркелĕх хуралçисем нихăш пĕлтерĕве те тимлĕх уйăрмасăр хăварман. Халăх шанăçне тӳрре кăларас тĕллевпе (ыйтăм кăтартăвĕсем тăрăх, Чăваш енре пурăнакансенчен 65 проценчĕ милици ĕçне лайăх хаклать), Шалти ĕçсен министерстви урамри преступноçе пысăк тимлĕх уйăрнă. Йăлана кĕнĕ меслетсемсĕр пуçне, информаци базисене тăвассипе çыхăннă ăслăлăхпа техника çитĕнĕвĕсемпе те усă кураттăр. Урамсемпе обществăлла вырăнсене пăхса тăракан хатĕрсемпе усă курни тата диспетчер пункчĕсем кирлĕ вырăна милици нарячĕпе пĕрлех хушма вăй вырăнне уйрăм сыхлав предприятийĕсен тата хăрушсăрлăх службин сотрудникĕсене яма май параççĕ.

**- Право нормисене пăснă тĕслĕхсене асăрхаттарас тĕлĕшпе Чăваш Ен милицийĕ мĕнле меслетсемпе усă курать?**

– Раççейри ытти пысăк хуласенчен тĕслĕх илсе, кăçал çуркунне Шупашкарта та милицие васкавлăн чĕнмелли кнопкăсем вырнаçтарнă. Çакнашкал кабинкăсем Хусанкай тата Ленин Комсомолĕн урамĕсен тăваткалĕнче, Çĕнĕ кăнтăр микрорайонта “Ромашка” лавкка çуртĕнче пур. Кĕçех вĕсем хулари лăпкă мар ытти вырăнсенче те пулĕç. Пулăшу кирлĕ çын кнопка пусса Шалти ĕçсен министерствин дежурнăй чаçĕпе çыхăнать. Адреса пĕлтерме те кирлĕ мар – пулăшу ыйтнă вырăна ятарлă карттăпа тупаççĕ. Ку питĕ меллĕ. Акă нумай чухне вăрăсем куç хывнă япала – кĕсье телефонĕ. Çапла, шар курнă çын ниепле те “02” номерпе шăнкăравлаймасть. “Гражданин – милици” васкавлă çыхăну кабинисене вырнаçтарни криминогенлă лару-тăрăва улăштарасса шанатпăр.

Обществăлла йĕркелĕхе хӳтĕлессине 5 пин дружинник активлă хутшăнать. Халăх дружинисене муниципаллă органсен йышăнăвĕсемпе йĕркеленĕ, ял поселенийĕсен тата хула округĕсен шайĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсен пулăшăвĕпе 2006 çулта 400 ытла преступлени уçса панă.

Тĕрлĕ службăсен пĕрлештернĕ вăйĕпе пĕрлĕхлĕ телекоммуникаци сечĕ пулса пырать. Вăл айăпланма пултаракан кашни çын çинчен информаци илме даннăйсен базине пĕрлештерме май парать. Ку информаци кĕске вăхăтрах тĕрĕс йышăну тума пулăшать. Раççейĕн тĕрлĕ регионĕсенче преступленисене уçса парас тĕллевпе мĕнле меслетсемпе, çĕнĕлĕхсемпе усă курнине те сăнасах тăратпăр. Ют регионти ĕçтешсен паха опытне хаклатпăр кăна мар, хамăр ĕç-хĕлте те пурнăçа кĕртетпĕр.

Обществăн сывă вăйĕсене йĕркелекен виçĕ шайлă (республика, хула, ял) тытăм туса хунă. Участковăйсемпе пĕрле общественность ячĕпе профилактика канашĕ те хăйсене киревсĕр тытакан – вĕçĕм ӳсĕр çӳрекен, вăрçма-харкашма юратакан – граждансемпе ĕçлет. Çапла майпа преступленисем тăвас туртăм пур çынсене тупса палăртса учета илеççĕ. Йĕркелĕхе тĕрĕслесе тăма çĕнĕ майсем тупăнаççĕ. Ял поселенийĕн халăх суйланă пуçлăхĕсĕр тата депутачĕсемсĕр пуçне профилактика канашĕсене опытлă вĕрентекенсем, тухтăрсем, культура ĕçченĕсем тата ытти хисеплĕ çынсем кĕреççĕ. Палăртмалла, канаш хăйĕн ĕçĕнче ăнăçсăр çемьесенче ӳсекен, пурнăçри хăш-пĕр лару-тăрăва кура кукăр çул çине тăма пултаракан çул çитмен çамрăксене пысăк тимлĕх уйăрать. Ку çивĕч ыйтусене татса парассинче общественность вăйĕпе усă курни питĕ пĕлтерĕшлĕ.

**– Килте хатĕрленĕ эрех е суррогат сутакансем нумайланса кайни халăха питĕ пăшăрхантарать. Шалти ĕçсен министерстви ку пулăмпа мĕнле майсемпе кĕрешет?**

– Саккуна пăснă тĕслĕхсене асăрхаттарас енĕпе ирттерекен патшалăх политикин тĕп положенийĕсене тата тĕрлĕ социаллă-экономика процесĕсен çитменлĕхĕсене чакарассипе пурнăçлакан мерăсене Чăваш Республикинче 2007– 2009 çулсенче преступноçпе кĕрешессине вăйлатассипе йышăннă Республикăри комплекслă программăра, “Чăваш Республикинче саккуна пăснă тĕслĕхсене асăрхаттарас тĕллевпе 2006 – 2008 çулсем валли йышăннă комплекслă мерăсем” тĕллевлĕ программăра çутатса панă.

Шалти ĕçсен министерстви пуçарнипе Министрсен Кабинечĕ “Чăваш Республикин территорийĕнче алкогольлĕ продукци çаврăнăшне йĕркелессипе çыхăннă мерăсем çинчен” тата “Алкогольлĕ продукцине ваккăн сутассине йĕркене кĕртессипе хушма мерăсем” постановленисем йышăннă. 2006 çулта сутас тĕллевпе килте эрех хатĕрлесе упранă тата сутнă 6268 тĕслĕх тупса палăртнă.

Алкогольлĕ продукци сутасси енĕпе саккунлăха пăснăшăн республикăра 74,8 пин çынна явап тыттарнă. Штрафсен пĕтĕмĕшле сумми 10,5 миллион тенкĕпе танлашнă.

**– Тытăм усă мар-тăк, унăн ĕçĕ-хĕлĕ пирки информаци ирĕклĕ пулмасан халăх ăнланулăхне тата шанăçне çĕнсе илеймĕн. Паянхи кун Шалти ĕçсен министерстви усă тытăм-и?**

Гражданcен шалти ĕçсен органĕсене шаннин шайне ӳстерессине, службăри ĕçхĕлте çынсен прависене тата ирĕкĕсене хисеплессине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Массăллă информаци хатĕрĕсемпе пĕрле тачă çыхăнса информаципе пропаганда ĕçне ирттеретпĕр, Шалти ĕçсен министерствин Интернет-сайчĕ пĕрмаях ĕçлет. Кунсăр пуçне сайтра “хăна кĕнекине” уçнă: унта кĕрсе кашниех шалти ĕçсен органĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен ыйтса пĕлме е çитменлĕхсене пĕлтерме пултарать. Ыйтусене граждансен заявленийĕсемпе пĕлтерĕвĕсене пăхса тухма палăртнă вăхăтра хуравласа сайта вырнаçтараççĕ. Ку ĕç-хĕле правăна хӳтĕлекен, ветерансен тата ытти обществăлла организацисене тата тĕн конфессийĕсене хутшăнтарас тĕллевпе Шалти ĕçсен министерстви çумĕнче обществăлла канаш ĕçлет.

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне**

# Пĕрле çанă тавăрса ĕçлемелле. Урăхла çул çук

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Кĕрхи культурăсене ытларах акмаллине ял хуçалăх предприятийĕсем ăнланса илчĕç ĕнтĕ. Иртнĕ çул районĕпе пĕтĕмпе те 3720 гектар йышăннă пулсан кĕрхи культурăсем, кăçал 1700 гектар ытларах – 5400 гектар çинче акса хăвартăмăр. Ку цифрăна татах та пысăклатма пулатчĕ, енчен те Ленин яч. хис., К. Иванов яч. хис., “Передовик”, “Лидер” хуçалăхсенче ку тĕлĕшпе çине тăрарах ĕçленĕ пулсан. Хуçалăхсемшĕн хăйсемшĕн те лайăх пулатчĕ, килес çулхи тырпул тухăçĕ япăх мар пуласса халех пĕлнĕ пулĕччĕç.

Кĕр тыррисене уйрăмах малтан палăртнинчен “Ударник”, Суворов яч. хис., “Свобода”, Чкалов яч. хис. хуçалăхсем ăнăçлă ĕçлерĕç. Çанталăк условийĕсемпе туллин усă курчĕç. Çитес çулхи тыр-пул тухăçĕшĕн кăçалах тăрăшрĕç.

Пирĕн район яланах çĕр улми туса илессипе палăрса тăнă. Тыр-пул тухăçĕ пысăках пулмасан та, çĕр улми пире йывăр лару-тăруран хăтарать. 900 гектар çинчен 11435 тонна пуçтарса кĕртнĕ “иккĕмĕш çăкăра”. Ку ĕçре хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те активлă ĕçлерĕç. Вĕсенче çĕр улми тухăçĕ 200 центнертан кая пулмарĕ. Ял хуçалăх предприятийĕсенчен Ильич яч. хис., “Ударник”, “Восток”, “Герой” хуçалăхсенче, çĕнĕрен йĕркеленнĕ “Да-Ан” предприятинче япăх мар тухăç туса илчĕç.

Тыр-пул тухăçлă пуласси кĕрхи çĕртмене вăхăтра туса ирттернинчен те нумай килет. Пурнăç опычĕ пысăк, аслă ăрури çынсем те çакнах çирĕплетеççĕ. Кашмашри В. Иванов пĕрре мар çырчĕ кун пирки район хаçатĕнче те. Çакна тата специалистсем каланине шута илсе, тивĕçлĕ çанталăк условийĕсенче иртнĕ çулхинчен 2 пин гектар ытларах – 8430 гектар çинче кĕрхи çĕртме туса хăвартăмăр. Ку енĕпе ырă тĕслĕх пулса тăракансем маларахра кĕр тыррисем ытларах акассипе палăрнă хуçалăхсемех. Çителĕксĕр ĕçленисем те малтан ку енĕпе асăннă хуçалăхсемех пулчĕç. Ăçта çĕрпе пĕлсе ĕçлеççĕ, хăйсен ĕçне пĕлекен кадрсем пур, унта тухăçлă тыр-пул туса илеççĕ.

Тепĕр задача вăл – çитес çул пирĕн районта Республика кунне хатĕрленсе ирттермелле. Ку – пирĕншĕн питĕ пысăк чыс. Çав вăхăтрах питĕ пысăк яваплăх та. Паян Муркаш районĕнче çĕр ĕç культури кирлĕ шайра теме çук, çавăнпа та пирĕн çак усă курман пĕр гектар пушă лаптăк та хăвармалла мар. Ку вăл уява хатĕрленсе ирттернĕ ĕç çеç мар. Хамăршăнах лайăх çакă.

**– Çĕр ĕçченĕсен хĕрӳ тапхăр хыçра ĕнтĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсен вăл хĕрсе çеç пырать. Кунта продукци илессипе лару-тăру мĕнле паян?**

– Кунта чи малтанах Муркашри чăх-чĕп фабрики ăнăçлă ĕçленине палăртас килет. Паян выльăх-чĕрлĕхрен мĕн чухлĕ продукци илнине ял хуçалăх предприятийĕсемпе кăна мар, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе, килти хушма хуçалăхсемпе те анализ тăватпăр. Статистика органĕсем те шута илеççĕ çакна. Аш, сĕт туса илессине çулсеренех 2-3 процент хăпартса пыратпăр. Ку çителĕклĕ теме çук. Уйрăмах ял хуçалăх предприятийĕсенче. Аш, сĕт хакĕ те хăпарсах пырать юлашки вăхăтра. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ укçа çăл куçĕ пулса тăрать. Апла пулсан мăйракаллă шултра выльăхсен йышне хăпартмалла паян ял хуçалăх предприятийĕсенче. Унсăрăн пысăк çитĕнӳсем тăвасси иккĕленӳллĕ.

Кăçалхи 10 уйăхра усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне районĕпе вăтамран 228,4 центнер сĕт туса илтĕмĕр. “Герой” хуçалăх кăтартăвĕ 588,2 центнерпа, Ильич яч.хис. хуçалăхăн 529,3 центнерпа танлашать. Çав хушăрах Ленин яч. хис., Андреев яч. хис., К. Иванов яч. хис. хуçалăхсемпе “Лидер” АФ кăтарту халь çеç асăннă малта пыракан хуçалăхсеннинчен 3-4 хут пĕчĕкрех. Ку вăл пĕр районтах пĕр пек условисенчех çакăн пек уйрăмлăх.

Аш вара усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне районĕпе вăтамран 53,9 центнер туса илнĕ ял хуçалăх предприятийĕсенче. Иртнĕ çулхинчен пысăкрах кăтарту ку. Хаксем пĕр вăхăт чакса кайрĕç пулин те, ял хуçалăх предприятийĕсем производствăна тытса тăма пултарчĕç. “Свободăра” ку кăтарту 112,1 центнерпа, “Орининăра”118 центнерпа, “Востокра” 107 центнерпа, “Геройра” 102 центнерпа танлашрĕ. Çавăнпа пĕрлех “Передовик”, “Сеятель”, “Рассвет”, “Волга”, Чапаев яч. хис. хуçалăхсенче çак кăтартусем малти хуçалăхсеннинчен 3-шер хут пĕчĕкрех. Паян çакă район администрацине питĕ хумхантарать. Предприятисем пĕр пек йĕркеллĕ аталанччăр тесе пулăшмалла. Ку тĕлĕшпе пирĕн енчен те çитменлĕх пулнине те йышăнмаллах пирĕн.

Выльăх-чĕрлĕх пăхнă çĕрте чуна парса ĕçлекен çынсем тăрăшаççĕ. Вĕсене тав сăмахĕ каламалла. Çăмăл мар вĕсене. Анчах та пурте вĕсенчен килмест-çке. Апат пахалăхĕнчен те нумай килет выльăх-чĕрлĕх продукцине илесси. Вăл вара пахалăхлă темех çук.

Ял хуçалăхĕ вăл – ĕçсене ал вĕççĕн тумалли отрасль мар. Ĕçе механизацилесси çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Пирĕн ял хуçалăхĕнче техника çителĕксĕр темелле мар. Çĕнĕ технологипе ĕçлемелле, пысăк вăйлă тракторсемпе ĕçлемелле. Унсăрăн ĕç вăйлă пулмасть. Паян вара механизаторсемсĕр тунсăхлакан техника йышĕ те ӳссех пырать, механизаторсен йышĕ чакрĕ. Çавăнпа та пирĕн задача – ял хуçалăхне кадрсемпе, эффективлă пур енлĕ техникăпа тивĕçтересси.

**– Альберт Николаевич, “АПК аталантарасси” наци проекчĕ ял хуçалăхне йывăрлăхран кăларас ĕçре самай пысăк витĕм кӳчĕ. Конкретлă тĕслĕхсем илсе кăтартсан татах та ăнланмалларах пулĕччĕ.**

– Ку чăннипех те çакăн пек пулнине районта пурăнакансем хăйсем те ăнланса илчĕç пулĕ тетĕп. Наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма икĕ çул хушшинче 1658 çын пурĕ 253253 пин тенкĕлĕх кредит илчĕç.

Районти хуçалăхсем вара инвестици кредитне пурĕ 37449, 8 пин тенкĕлĕх илчĕç. Ильич яч. хис., Суворов яч. хис., “Свобода”, “Ударник”, “Герой” хуçалăхсем çав укçа-тенкĕпе эффективлă усă курчĕç. Çав хушăрах “Рассвет” хуçалăх илнĕ кредитпа вăхăтра усă кураймарĕ, туяннă оборудованиене ĕне фермине вырнаçтараймарĕ. Кунпа эпĕ мĕн каласшăн? Паян май килнĕ таран хуçалăхсен кредитпа эффективлă усă курмалла, çапла майпа производствăна аталантармалла.

**– Ял хуçалăх предприятийĕсен экономикине аталантармалли çул-йĕр тата мĕнре тесе шутлатăр?**

– Тӳрех каламалла. Ял хуçалăх производстви вăл – питĕ теветкеллĕ отрасль. Кунта çут çанталăк условийĕсенчен те нумай килет. Çапах та ытларах хамăртанах нумай килет. Производствăна кирлĕ пек йĕркелесси, технологие пăхăнса ĕçлесси, дисциплина та ял хуçалăх предприятийĕсенче кирлĕ шая çитнĕ теме çук-ха.

Çапах асăнмалла, юлашки вăхăтра районти пĕр ял хуçалăх предприятине те çĕнĕрен панкрут çулĕ çине кăларман. 15 ял хуçалăх предприятин малтанхи парăмĕсене, Ял хуçалăх министерствипе килĕшӳллĕн, реструктуризацилеме май килчĕ. Паян пурте вĕсем хăйсен умĕнчи условисене пурнăçласа пыраççĕ. Çăмăл мар ку, паллах. Налуксене вăхăтра тӳлесси – кашни предприяти тивĕçĕ.

Депутатсен районти Пухăвĕн ларăвĕнче ял хуçалăхне çитес çулсенче аталантармалли программа йышăнтăмăр. Унпа тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе килĕшӳллĕн кашни çулах ял хуçалăх производствине пысăклатса пымалла. Ку ĕçе туса пыма хуçалăхсен право тĕлĕшĕнчи формисене аталантарас пирки те каланă çав программăра.

Тӳрех çакна калас килет. Паян чылай ял хуçалăх кооперативĕн членĕсем хăйсене хуçа пек туймаççĕ. Çавăнпа та пур çĕрте те хуçалăхсем эффективлă аталанса пыраймаççĕ. Çавăнпа та çитес вăхăтра ял хуçалăх кооперативĕсене малалла аталантарса, вĕсен никĕсĕ çинче акционерсен предприятине тума палăртнă. Çапла вара халăха улталаса хуçалăха искусствăлла майпа панкрута кăларасси, хуçалăх пурлăхне уйрăм çын çине куçарасси пулмалла мар. Кашни кооператив членĕ хăйĕн пайĕпе хăй пĕлнĕ пек усă курма пултартăр.

**– Калаçу вĕçленсе пынă май мĕн каланă пулăттăр хаçат вулакансене?**

– Районăн ку таранччен аталанăвне пĕтĕмлетсе, çакна татсах калама пулать: ытти районсемпе танлаштарсан, Муркаш районĕ малти вырăнсене тытса пыма тăрăшать. Ĕнер акă республикăра Ял хуçалăхпа апат-çимĕç тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунне паллă турăмăр. Республика виçĕ зонăна пайланать пулсан, Çурçĕр енче вырнаçнă районсенчен Муркаш районĕ 2 вырăна тухни паллă пулчĕ. Пирĕн районти 3 хуçалăх малти вырăн хуçисем пулса тăчĕç. Муркашри чăх-чĕп фабрики çĕнтерӳçĕ дипломĕпе 50 пин тенке тивĕçрĕ, “Герой” хуçалăх техникăпа лайăх ĕçленĕшĕн, ăна кирлĕ пек управа лартнăшăн тивĕçрĕ дипломпа 45 пин тенке, “Свобода” хуçалăх вара производствăна эффективлă йĕркеленĕшĕн илчĕ дипломпа 25 пин тенке.

Район малашлăхне халăх курать, сисет. Малтанхи çулсемпе танлаштарсан, паян ĕçлеме, аталанма ял хуçалăхне те, производствăпа харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекенсене те патшалăх тивĕçлĕ условисем туса пама тăрăшать. Ĕçлемесĕр, тар кăлармасăр нихăçан та ĕç пулмасть. Çавăнпа та пирĕн паянхи задача – çак аталану çулĕ çинчен анмалла мар. Паллах, çăмăл çул мар. Уйрăмах çитес суйлав умĕн пурнăçа кĕске вăхăтрах лайăхлатма, ĕç укçине тӳрех 3-4 хут пысăклатма сăмах паракансене шанма йывăр. Пурнăç вăл кăткăс япала. Ăна йĕркелесе пымалла. Пĕрпĕринпе килĕштерсе, сыпăнтарса тивĕçлĕ йышăнусем тусан кăна малалла аталанма пулать. Паян Муркаш районĕ шăпах çак çул çинче. Йывăр пулсан та малалла пĕрлех çак аталану çулĕпех каймалла пирĕн, хаçат вулакансем, район çыннисем. Урăхла çул çук. Сăмах вăл – пĕр япала, ĕç – тепĕр тĕслĕ. Наци проекчĕсем пурнăçа майлаштарса пыма пулăшнине пурте куртăмăр ĕнтĕ. Тумалли татах та нумай. Çавăнпа та çанă тавăрса пĕрле ĕçлемелле пирĕн, Раççей тата республика тытса пыракан политикăпа килĕштерсе, пĕрпĕрне ăнланса, пуçарнă ĕçсене малалла тăсмалла пирĕн. Чи тĕрĕс çул çакă.

**– Тавах, Альберт Николаевич, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА**
**калаçнă.**